**Юлташпа вăйсăрри те вăйлă**

Çуркунне çитсен, эпĕ ыйтнипе, атте шăнкăрч вĕлли турĕ. Эпир ăна пахчара ӳсекен пилеш йывăççи çине çакса хутăмăр. Çав кунран пуçласа вара эпĕ шăнкăрч-сене кĕтме пуçларăм. Акă, унта та кунта вĕсен илемлĕ те асамлă юрри илтĕне пуçларĕ. Пирĕн вĕлле саплах пушă ларать-ха. Малтанласа аттене кӳрентĕм.

— Атте, эсĕ шăнкăрч вĕллине лайăх тавайманăн пуль? Илемсĕр вăл сан, çавăнпа та унта кайăксем илен-меççĕ, — терĕм ăна пĕррехинче.

— Ан васка. Халь пур шăнкăрч та вĕççе килеймен-ха, вĕсенчен чылайăшĕ çул çинче ĕнтĕ. Кĕç-вĕç çитмелле вĕсем. Эсĕ хытăрах кĕт, вара кайăксем те часрах вĕççе килĕс. Вĕлле пирки пĕрре те ан кулян. Эп ăна шăнкăрчсене кирлĕ пек пĕлсе турăм. «Илемсĕр» тесе те уссăрах тиркетĕн эсĕ ăна. Пăх-ха, епле вăл тăпăл-тăпăл та çыпăçуллă çурт.

— Анчах пирĕн пӳрт çине тата шăнкăрч вĕлли çине пăх эсĕ. Хăшĕ илемлĕрех? Хамăр çурта эпир темиçе тĕрлĕ тĕспе сăрланă, кайăксемшĕн вара пĕр тĕслĕ сăра та шелленĕ, — çаплах кăмăлсăррăн мăкăртатрăм эпĕ.

— Ара, ăçта курнă эсĕ сăрăпа илемлетнĕ шăнкăрч вĕллине? Кайăка çурт илемĕ илĕртмест, ăна йăва па-халăхĕ интереслентерет. Енчен те вăл шăтăк-çураксăр, хăтлă; таса та ăша пулсан, шăнкăрч сав вĕллене йышăнатех. Эпĕ вара шăп çавăн пек турăм та, — лăпкăн ăнлантарать атте.

Ун сăмахне итлесе эпĕ те каштах лăплантăм. Çапах та пушă шăнкăрч вĕлли мана çаплах пăшархантарчĕ-ха.

Кантăк умĕнче ларнă чух курах кайрăм: пĕр шăнкăрч пирĕн вĕллене кĕрет те тухать, кĕрет те тухать... Савăнса ӳкрĕм. «Ну, халĕ ĕнтĕ эпир те шăнкăрчлă», — шутлатăп хам. Анчах ман савăнăç нумая пымарĕ. Ара, шăнкăрчĕ пĕчченех-çке, вĕсем вара иккĕн пулмалла. Манăн хаваслă кăмăл сӳнчĕ.

— Мĕн эсĕ каллех салху? Шăнкарч вĕллене иленчĕ вĕт, — асăрхарĕ çакна атте.

— Мĕн усси унтан? Вăл пĕччενех килнĕ.

— Шăнкăрч халлĕхе кăна пĕччен. Илтетĕн-и, епле юрă шăрантарать вăл? Ун юррине илтсе мăшăрĕ те часах тупăнĕ. Шăнкăрчсен йăли çапла: малтан пĕри, йă-ва тупса хурать те теприне юрăпа йыхăрма пуçлать, — тет атте.

Чăнах та, атте каланă пекех пулчĕ. Тĕпĕр кун ирхине, эпĕ ыйхăран вăранса картищне тухнă тĕле, вĕлле умĕнче икĕ шăнкăрч ларать.

/нтĕ кайăксем чĕпĕ те каларчĕç, вĕсене вĕçме те хăнăхтарчĕç. Кĕркунне çитсен, ăшша юратакан ытти кайăксем пекех, кăнтăралла çул тытрĕç. Мĕн тăвăн, кайăкăн хăйĕн пурнăçĕ. Шел пулин те, вĕсене тытса чараймастăн çав.

Тăлăха юлчĕ пирĕн шăнкăрч вĕлли. Мĕскĕннĕн курă-нать вăл.

Сивĕ çилсем вĕрме тытăнчĕç. Юрлă-çумăрлă çанталăк пуçланчĕ. Шăп çак вăхăтра шăнкăрч вĕллине çерçисем йышăнчĕç. Кусем вара шавлă кайăксем, кунĕн-çĕрĕн картишĕнче чĕриклетеççĕ. Чăхсене панă апат

юлашкисене пуҫтараҫҫӗ вӗсем кунта. Сивӗ хӗл кунӗсенче те хаваслӑччӗ ҫерҫисем. Ара, ҫурт пур, апат пур. Тата мӗн кирлӗ вӗсене?

Ҫуркунне ҫитрӗ. Кӑнтӑртан кайӑксем вӗҫсе килме пуҫларӗҫ. Анчах ҫерҫисем хӑйсен хӗллехи хваттерне пӑрахса кайма шутламарӗҫ те пулмалла.

Акӑ, пирӗн вӗлле тавра шӑнкӑрч вӗҫме пуҫларӗ, анчах ниепле те шала кӗреймест. Кӗрсе тухмалли шӑтӑкра ҫерҫи ларать-ҫке-ха. Шӑнкӑрч ун патне ҫывӑхах вӗҫсе пырать, хӑратасшӑн пулӗ. Лешӗ вара хӑракан йышши мар, шит те чакмасть. Ҫакна курсан тарӑхсах кайрӑм. Епле вӑл намассӑр, хӗл каҫнӑ, ҫитет! Халь пушат сурта! Ӑна сан валли туман вӗт, вӑл шӑнкӑрч йӑви, Анчах эпӗ вӑрҫни ҫерҫишӗн ниме те пӗлтермест.

— Атте, эсӗ ку вӗллене кам валли тунӑ: ҫерҫи е шӑнкӑрч валли? — ним тума аптранипе атте ҫумне ҫулӑхрӑм эпӗ.

— Ӑшталанса ан ҫӳре. Кайӑксем хӑйсенне хӑйсем пӗлеҫ, хуравларӗ вӑл.

— Шӑнкӑрч таҫтан аякран вӗҫсе килнӗ, вӑл ывӑннӑ ӗнтӗ, канасси те килет пуль. Анчах ун йӑвине, авӑ, йышӑннӑ. Эс вара шӑнкӑрча пӗрре те шеллемӗстӗн-и? — аттенӗ ӳкӗте кӗртесшӗн эпӗ.

— Шеллетӗп, ачам, шӑнкӑрчне те, ҫерҫине те шеллетӗп. Анчах эпир вӗсене нимпе те пулӑшаймастпӑр. Чӗр чунсен пурнӑҫ саккунӗ ҫапла: кам вӑйлӑрах, ҫав ҫӗнтерет, — терӗ атте.

Капла калани мана та кӑсӑклантарса ячӗ. Чӑн та, хӑшӗ вӗсенчен вӑйлӑрах?

Шӑнкӑрчпа ҫерҫи ҫаплах пӗр-пӗрне парӑнмассӗ. Хӑйсем кайӑк чӗлхипе тем чӗвӗлтетеҫҫӗ, ҫуркуннехи таса сывлӑшра вӗсен сасси ян-ян каять. Унччен те пулмасть, шӑтӑк умӗнче ларакан ҫерҫи вӗҫсе кайрӗ. «Аха, парӑнчӗ!» — шутларӑм эпӗ хӗпӗртесӗ. Ҫук, иккен, ун вырӑнне тепӗр ҫерҫи йышӑнчӗ. Нумай-и, сахал-и, пирӗн вӗлле патне пӗр кӗтӳ ҫерҫи пуҫтарӑнчӗ. Вӗсене леш ҫерҫи чӗнсе килчӗ пулмалла. Эх, пуҫланчӗ вара шӑв-шав! Пӗр кӗтӳ ҫерҫи шӑнкӑрч тавра хӗвӗшет, хӑюллӑраххисем ӑна сӑмсипе таккаса та илеҫҫӗ. Чӑтаймарӗ шӑнкӑрч, вӗҫсе кайрӗ. Ҫерҫисем кун хыҫҫӑн пӗр кана шавлакаларӗҫ те пӗрерӗн-пӗрерӗн саланса пӗтрӗҫ. Ҫурт хуҫи кӑна, ним пул ман пек, вӗлле умӗнче мӑнаҫлӑн каҫӑрӑлса ларать.

Ҫак ҫапӑҫӑва аттепе иксӗмӗр те пӑхса тӑтӑмӑр.

— Ҫерҫи — усал кайӑк, начар вӑл, — хамӑн шухӑша пӗлтерме васкарӑм эпӗ.

— Усалах-ши? Мана пӗрре те ун пек туйӑнмасть. Мӗншӗн тесен пӑхха эсӗ, мӗнле вӗсем туслӑн пӗр пулса юлташне пулӑшма пуҫтарӑнчӗҫ. Шӑнкӑрч вара печчен, ун хутне кӗме юлташӗсем килмерӗҫ. Кунта, ман шутпа, ачам, тӑванлӑх туйӑмӗ, туслӑх ҫӗнтерчӗ. Этӗм те ҫавах. Пӗр-пӗрин хутне кӗрсен, вӑйсӑрри те вӑйлӑ, пӗччен чух вара вӑйли те халсӑр. Ҫакна яланах асра тыт, — терӗ атте.

*Туркай, О. Юлташпа вӑйсӑрри те вӑйлӑ : [калав] / О. Туркай // Чӑваш*

*литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. – С. 468-469.*